Диспансеризаци ыйтăвĕсемпе

Сывлăхшăн кашнин тăрăшас пулать

Кашни çын тивĕçĕ харпăр хăй сывлăхне сыхласси пулса тăрать. Çавăнпа та сывлăх пулсан, ыттине укçалла туянма пулĕ. Аристотель çапла каланă: “Сын сывă пулни – телей”.

Районта сывлăха сыхлас ĕç пĕр вырăнта тăмасть, малаллах аталанса пырать, ăна эпир практика врачĕн уйрăмĕсем уçăлнинчен те куратпăр. Сывлăха анлăрах тĕрĕслес тĕллевпе ачасемпе çулсеренех диспансеризаци ирттерессĕ. Халĕ, акă, аслă çулхисемпе те ĕçлеме пуçланă. Çакăн пирки тĕплĕнрех каласа кăтартма “Муркаш районĕн тĕп больници” муниципаллă сывату учрежденийĕн поликлиника ертӳçинчен Е.Н. СЕМЕНОВĂРАН ыйтрăм.

– Елена Николаевна, диспансеризаци ĕçĕ аталану тапхăрĕнчи çĕнĕлĕх е авалтан пыракан тĕрĕслев?

– Чăнах та эпир аталану тапхăрĕнче пурăнатпăр тенипе килĕшме пуçларăмăр. РФ Президенчĕ В. Путин аталану çулне анлăлатас тĕлĕшпе тĕрлĕ енлĕ наци проекчĕсем палăртать. Вĕсенчен пĕри халăх сывлăхĕ пулса тăрать. Çакă вăл питĕ кирлĕ те вырăнлă утăм, сывлăха сыхлас ĕçĕн чи кирлĕ çул-йĕрĕ тесе калас килет.

Диспансеризаци вăл – граждансен, çын сывлăхне тĕрĕслесе чирсене пуçламăш тапхăрта тупса палăртса ăна малалла аталанма парас мар тесе пуçарнă ĕç тата сывă пурнăç йĕркине анлăн сарасси. Ку, паллах, çĕнĕлĕх мар. Ун пирки иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕш çулĕсенчех нумай шухăшланă. Анчах та çак ĕçе туса ирттерме кирлĕ оборудованисемпе условисем пулман. Вăл вăхăтра сывăхра фельдшерпа акушер пункчĕсем кăна пулни те диспансеризаци çине ыра витĕм кӳмен. Больницăсем вара сайра пулнă тата аякра вырнаçнă.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн ку ĕçе пурнăçлама майсем пур: кирлĕ йышши оборудовани, пысăк квалификациллĕ специалистсем. Çавăнпа та РФ Президенчĕн 868 номерлĕ постановленийĕпе килĕшӳллĕн Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерстви 188-мĕш хушу кăларчĕ. Çак хушăва пăхăнса апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 35-55 çулсенчи бюджетра ĕçлекенсене хушма диспансеризаци тума пуçларăмăр. Ку категорие вĕрентӳпе культура, сывлăха сыхлас, социаллă пулăшу панă çĕрте тăрăшакансем кĕрессĕ.

– Ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсене аякка хăварчĕç-и е каярах диспансеризацилессĕ?

– Çук, вĕсене аякка хăвармарĕç. Министерствăн 189-мĕш хушăвĕпе килĕшӳллĕн сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, палăртатăп, диспансеризаци мар, хушма медицина тĕрĕслевĕ ирттерессĕ. Çавăн пекех ытти сиенлĕ факторсемпе ĕçлекен предприятисенчи çынсене те тĕрĕслессĕ. Кунта кам хăш çулхине пăхмасăрах пурне те тĕрĕслессĕ.

– Ку тĕрĕслеве патшалăх шутĕнчен саплаштарассĕ е харпăх хăйĕн тӳлемелле?

– РФ ятарлă медицина страховани фончĕ тата РФ социаллă страховани фончĕ ĕçлекен граждансене диспансеризаци тума каякан тăкаксене саплаштарасси çинчен пĕрлехи приказ кăларчĕ. “Сывлăх” наци проекчĕ ĕçлекен граждансен сывлăхне тĕрĕслеме палăртрĕ, çавăнпа та çакă пĕтĕмпех патшалăх шучĕпе пулать, çынсен тӳлемелле мар.

– Медицина тĕрĕслевĕпе диспансеризаци хушшинче уйрăмлăх пур-и?

– Пĕр енчен пăхсан пĕр евĕрлĕ пек те туйăнать, çапах та вĕсем хушшинче уйрăмлăх пур. Медицина тĕрĕслевĕнче профессий чирĕсене тупса палăртасси çине тимлĕх уйăрассĕ, çак ĕçе юрăхсăр е юрăхлă пулнине пĕтĕмлетессĕ.

Диспансеризаци тĕрĕслевĕнче чирсен малтанхи тапхăрне тупса палăртасси, сиплессине йĕркелесси тата реабилитацилесси шутланать.

Диспансеризацире чи малтанах анлă сарăлнă туберкулез, рак, глаукома, сахăр диабетне, чĕре чирĕсене тупса палăртмалли меслетсемпе усă куракăр. Мĕншĕн тесен çак чирсенчен паянхи куна нумай çынсем инвалида тухаççĕ, вилекенсен шучĕ те ку чирсемпе чылай.

35-55 çулсенчисене тĕрĕслениие çапла палăртса хăварасшăн. Ку вăхăт шăпах ĕçлеме пултаракан çыннăн вăй питти тапхăрĕ шутланать. Чирĕсем те çак çулсенче аталанса систерме пуçлаççĕ. Диспансеризаци ĕçне туса ирттересси эпир врач уйрăмĕсене шанса панă, мĕншĕн тесен унта вăй хуракансем халăхшăн чи çывăх врачсем шутланаççĕ. Çакăнти врачăн пациентсем çинчен йăлт пĕлмелле: аслашшĕпе асламăшĕ, ашшĕпе амăшĕ, çывăх тăванĕсем мĕнпе чирленĕ, мĕнрен асăрханмалла.

Диспансеризаци витĕр тухакан валли ятарлă карточкăсем усмалла. Пĕтĕмлетĕве ушкăнсем çине уйăраççĕ. Пĕрремĕш ушкăна сыввисене кĕртеççĕ. Иккĕмĕш – чире пуçарма пултаракан факторсемпе çывăх пулнисене. Виççĕмĕш ушкăна чир паллисене тупнă çынсене кĕртеççĕ. Тăваттăмĕш – стационарта сипленмелли чирсемпе чирлекенсене. Пиллĕкмĕшне – шаларах кайнă чирсемпе чирлекенсене.

– Паянхи кун тĕлне диспансеризаци витĕр тухнисем чылай-и?

– 2006 çулта бюджетра вăй хуракансене диспансеризацилеме 863 çынна палăртнă. Паллах ку пысăк цифра мар район шайĕнче. 2007 çулта ăна ӳстерме пăхнă. Паянхи кун тĕлне 306 çынна тĕрĕсленĕ. Çак шута Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче пурăнакансем те кĕрессĕ. 2№ больница унта вырнаçнăран çывăхри ялсенче пурăнакансене тĕрĕслессине те унтах ирттерессĕ.

– Районта пурăнакансем ытларах хăш чирсемпе чирлессĕ, пурнăçран уйрăлассĕ?

– Районти кардиолог патĕнче учетра тăракансем йышлă пулни паллă, çаван пекех сывлав органĕсен чирĕсем те анлă сарăлнă.

Вилекенсенчен 50 проценчĕ ытла чĕрепе юн тымарĕн чирĕпе пурнăçран уйрăлакансем. Тĕрлĕ аварисене лексе сусăрăнса вилекенсем 16 процент ытларах. Сывлав органĕсен чирĕ хавшатнине пула 13 процент вăхăтсăр çут тĕнчепе сыв пуллашнă.

– Эсир сывлăх хуралĕнче пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕ специалист. Сирĕн ыра сĕнĕвĕрсемпе, ăшă сăмахăрсем пуриншĕн те вырăнлă. Юлашкинчен мĕн суннă пулăттăр?

– Енчен те çирĕп сывлăх пулмасан, пысăк ĕç укçи те, интереслĕ ĕç те ниме те тăмасçĕ. Сывлăхлă пуласси вара 90 процент çынран хăйĕнчен килет. Ыран эмел туянма укçа-тенкĕ тăкакличчен паян унпа сывлăха çирĕплетмелле. Сывлăхлă пулас тесен физкультурăпа тата спортпа туслă пулмалла.

Анчах та хăйĕн сывлăхне упраман, сывă пурнăç йĕркине тытса пырайман, пирус туртакан, эрех ĕçсе иртĕхекен, наркотиксемпе усă куракан çынна нимĕнле тӳлевлĕ тата тӳлевсĕр медицина та пулăшаймасть.

Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.

Ĕçре хастар

Çамрăк доярка

Кашнин асĕнчех ырă йĕр хăварнă çамрăклăх... Юн вĕренĕ вăхăтра талăкра 25 сехет унтакунта хыпаланнипе такамăн та çывăрас килет. Кунтах качча-семпе-хĕрсемпе ирхи шуçăмчен ыйхă вĕçтерни самантсем... Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет те ăна лайăх кĕтсе илсе, усăллă ирттерсе ăсатас пулать: вăхăт ситсен ирттернĕ кунсемшĕн кӳренмелле ан пултăр.

Лариса Кольцова улттăмĕш класс хыççăнах ĕне сăвакансем хушшинче курăнма пуçларĕ. Пĕрре çак ĕç тутине курчĕ те пуçĕпех унта путрĕ.

...Тăрăшуллă хĕрача ултăмĕш класс хыççăнах фермăна пычĕ те канма кайнă доярка вырăнне ĕçе тăчĕ. Ывăр пулчĕ ăна ирсерен ыйхăран вăранма, ĕнесене хăйсен вырăнне тăратма т. ыт. те. Анчах çакă хĕрачана хăратмарĕ. Ĕне сăвакансен ĕçĕ ăна хăйĕн авăрне çавăрса кĕрсе кайрĕ. Калама çеç çăмăл, анчах Лариса çиччĕмĕш класс пĕтерсен те фермăна пырса доярккăсене канма майсем туса пачĕ. Виçĕ уйăха яхăн доярккăра ĕçлерĕ вăл, ĕç чĕрĕкне “лайăх” паллăпа вĕçлерĕ. Канупа ĕçе ăнăçлă явăçтарса шкула каймa хăйне валли кăштах укçа та турĕ. Хăв алăпа ĕçлесе илнĕ укçа! Перекетлĕхе вĕрентет вăл, пурнăç çине хуçалла пăхтарать.

Пурнăç тутине ĕçре курма хăнăхнă хĕрача кăçал та шкул пĕтерсенех фермăна çул тытрĕ. Çу каçа доярккăсене пĕрин хыççăн теприне отпуска кантарса вĕсем вырăнĕнче ĕçлерĕ. Çамрăк та ĕçчен доярка аслă ĕçтешĕсем больница хучĕ илсен, вĕсен вырăнне те тăма хирĕç пулмарĕ.

... Нумай ачалла çемьерен Лариса. Кашниех ĕçе юратса ӳсеççĕ. Акă, Ларисан аппăшĕ Вера çуллахи каникулта фермăра доярккăра ĕçлерĕ. Виçĕ çул каникул вăхăтĕнче фермăра вăй хунă аппăшне кура йăмăкĕ те ун çулне суйларĕ. Ларисан йăмăкĕсем те пурăна-киле аппăшĕсен çулĕпе каясса шанас килет. Çакна валли сăлтавĕ те пур: йăмăксем çăвĕпе кашни кун аппăшне пулăшма ферма утрĕç. Доярка ĕçĕ çăмăл маринe хĕрачасем хăйсен ĕçĕнче курчĕç. Анлантăр, çăмăл мар, анчах сĕт сăвакан ĕçĕ лайăх ĕç. Çакна кулленхи ĕç опытĕнче пĕтĕмлетсе ĕçлерĕ çу каçа Лариса Кольцова. Телейлĕ пултăр сан çамрăклăху, ЛАРИСА!

В. ФЕДОРОВ.

Йӳçкасси ялĕ.

Пĕлтерӳсем. Объявления

сеть магазинов **Лидер**

ОГРОМНЫЙ ВЫБОР АУДИО ВИДЕО БЫТОВОЙ КОМПЬЮТЕРНОЙ ТЕХНИКИ

ЭЛЕКТРОИНСТРУМЕНТЫ, МЕБЕЛЬ, СПУТНИКОВЫЕ ТАРЕЛКИ, МОТОБЛОКИ, ТЕЛЕЖКИ

КУПИ БЕЗ ДЕНЕГ КРЕДИТ 0%

с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 5 Тел.: 2-13-80

Продаю недорого лес-кругляк и лафет 4-7-8-метровые. Обр.: с. Моргауши, тел.: 8-905-346-95-44; 2-14-61; 8-905-027-18-64.

Декабрь вĕçĕнче пĕрремĕш хут пăрулалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 60-165, Пăсăрманти Кожевниковран ыйтмалла.

ООО «Моргаушрайбыт» требуются на работу:
- инженер-электрик (опыт работы обязателен, оплата договорная);
- швеи с обучением на производстве.
Справки по тел.: 2-15-44; 2-18-40.

ОАО «МОРГАУШСКАГРОПРОМХИМИЯ» ТРЕБУЮТСЯ:
- водители на КамАЗ;
- трактористы-машинисты;
- инженеры-энергетики (4000 рублей, премиальные выплаты);
- электрогазосварщики (5000 рублей, премиальные выплаты).
Оплата сдельная, премиальные выплаты.

Пĕрре пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр. Адресĕ: Хорнуй ялĕ, Козьмой урамĕ, 50. Тел.: 8-927-845-19-53.

Бесплатное обучение на менеджера, трудоустройство. Тел.: 8(8352) 553-372; 8-906-388-04-71.

Продаю банный сруб липовый 5Х3 м.м., пятистенный, с предбанником. Есть материалы на стропилы. Цена договорная. Тел.: 8-960-309-12-30.

Кĕтӳрен кĕртнĕ чух иртнĕ эрнери кĕçнерни кун каçхине Çĕньял Муркашра шурă тĕслĕ, çăм касман 4 сурăх çухалчĕç. Куракан-пĕлекенсене Çĕньял Муркашри Ирина Владимировна Леонтьевана пĕлтерме ыйтатăп. Тел.: 2-23-18.

Организации (мебельное производство) срочно требуются рабочие с опытом работы, можно без опыта работы на постоянную работу. Оплата труда высокая, бесплатный проезд.
Адрес: с. Моргауши, ул. Заводская, 14. Тел.: 8-906-389-10-83.
2-4.

Моргаушский учебный класс (УКК МСХ п. Кугеси) организует курсы по подготовке:
- водителей автотранспортных средств категорий «В», «С»;
- трактористов категорий «С», «Е»;
- операторов котельных;
- электрогазосварщиков;
- переподготовка водителей автотранспортных средств категорий «В», «С» на «Д», «Е»;
- повышение квалификации трактористов.
Лицензия А № 148133.
Адрес: с. Моргауши, ОАО «Моргаушавтотехсервис», тел.: 8-906-386-97-57.

Ĕлĕкхи укçа, кĕнекесем, открыткăсем, статуэткăсем тата кивĕ япаласем туянатăп.
Тел.: 8-927-854-29-97.
5-5.

Продаю баян «Мелодия» в отличном состоянии по договорной цене.
Звонить по тел.: 8-960-307-83-10 или 2-23-00 (дом.).

«Муркаш издательство çуртĕ» патшалăх унитарлă предприяти коллективĕ кунта бухгалтер пулса ĕçленĕ З.З. Сергееван амăшĕ, водительте ĕçлекен В.С. Сергеевăн хуньамăшĕ

Перасковия Степановна НИКОЛАЕВА

вилсе кайнă пирки çемьипе тата тăванĕсемпе хурланса пĕлтерет.

ГИБДД асăрхаттарать

Инкексенчен асăрханасчĕ

Районти çулсем çинче инкексем пуласси чакмасть-ха. Акă, сентябрĕн 16-мĕшĕнче кăнтăрла иртни 4 сехет тĕлĕнче федераллă трассăн 616 километрĕнче АУДИ автомашина çуран çӳрекен, Шупашкарта пурăнакан Куртякова çапса хăварать. Куртяков районти тĕп больницăна лекет. Çак инкеке куракансене е пĕлекенсене районти шалти ĕçсен пайне шăнкăрavласа пĕлтерме ыйтатпăр.

Тепĕр инкек сентябрĕн 18-мĕшĕнче пулчĕ. Муркаш – Козьмодемьянск автоçулпа пыраканскер, ирхи 1 сехет тĕлĕнче Вомпăкассинче пурăнакан В.В. Кольцов «Москвич» автомашинипе кювета сикет. Вăл та районти тĕп больницăна лекет.

Сентябрĕн 20-мĕшĕнче те инкек пулчĕ. Кăнтăрла иртни 2 сехетре федераллă трассăн 603 километрĕнче Ковров хулинче пурăнакан В.А. Мишканов «Багем» автомашинипе çул хĕрринче тăракан «Вольво» автомашинăна пырса çапăнать. Телее, çынсем аманман.

Юлашкинчен пурне те çулсем çинче асăрханулла пулма ыйтас килет. Тимлĕрех пулни инкекрен хăтарĕ.

С. ИВАНОВ, районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕ.

ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”
Моргаушская районная газета
“ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ”

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3334.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 22.09.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.